

● *Елчĕксем гербпа ялавлă пулчĕç.*

# Анне сăмахĕ пек çывăх

***Республика Гербĕ, Ялавĕ, Гимнĕ – акă вĕсем, Чăваш патшалăхĕн символĕсем. Тĕрессипе, Чăваш Енĕн пĕрремĕш символĕсене чĕрĕк ĕмĕр каялла çеç мар, 1927 çултах çирĕплетнĕ.***

## Историрен

Апла пулин те иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчех Гербпа Ялава улшăнусем кĕртнĕ, 1938 çулта çĕнĕрен йышăннă Конституци витĕмĕпе патшалăх атрибучĕсем хăйне евĕрлĕхне пачах çухатнă. Çавна май Чăваш АССР Ялавĕпе Гербĕ РСФСР Гербĕпе Ялавĕнчен нимĕнпе те уйрăлса тăман. Вырăсла тата чăвашла: «Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!» – тесе çырнă унта. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче наци ăнланулăхĕ ӳсни, Чăваш патшалăх суверенитечĕ вăй илни Чăваш Республикинче патшалăхăн наци символĕсем патне таврăнма пулăшнă. 1990 çулхи раштавăн 15-мĕшĕнче ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕ патшалăх Гимнĕн, Гербĕн, Ялавĕн проекчĕсен конкурсĕн условийĕсене пĕлтернĕ. Унта стандартсемпе, планшетсен калăпăшĕпе, Гимн тексчĕсене мĕнле йĕркелемеллипе паллаштарнă. Конкурс комиссийĕнче 28 çын пулнă.

Конкурс вăхăтĕнче эскизсене республикăра пурăнакансем çеç мар, Самар, Ульяновск енче тĕпленнĕ йăхташăмăрсем те ярса панă. Комисси ĕçленĕ хушăра Элли Юрьевăн эскизĕсем уйрăмах ăнăçлине палăртнă. Шăпах вăл патшалăхăн çĕнĕ символĕсен авторĕ пулса тăнă. Патшалăх Гимнне – «Тăван çĕршыв» юрра – Илле Тукташ сăмахĕсемпе Герман Лебедев 1945 çулта Чăваш патшалăх академи драма театрĕнчи спектакль валли кĕвĕленĕ. Комисси членĕсем шăпах çак хайлав Гимн валли чи ăнăçлă ĕç тесе палăртнă. Республикăн Аслă Канашĕ вĕсене официаллă майпа 1992 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче çирĕплетнĕ.

Мĕнлерех усă куратпăр-ха вĕсемпе? Эпир хамăрăн Ялавпа, Гербпа, Гимнпа мăнаçланма тивĕçлĕ, вĕсем пурри пирĕн яваплăха та ӳстерме пулăшмалла. Ялаври сарă тĕс çинче – сакăр кĕтеслĕ виçĕ çăлтăр /тăван халăхăн иртнĕ, хальхи пурнăçĕ тата пуласлăхĕ/. Вĕсене пурнăç йывăçĕ çыхăнтарса тăрать. Чăваш тĕррине те пур-çке çав паллăсем. Несĕлĕмĕрсен кашни япалан хăйĕн палли, хăйĕн тĕсĕ пулнă. Хĕвеле яланах – сарă, çĕре – хура, шывпа тӳпене кăвак тĕссемпе эрешленĕ. Пурнăçа чăваш хĕрлĕ тĕспе палăртнă. Апла пулсан пин çул авалхи пуянлăх хальхи куна çитнĕ-çке.

Патшалăх символĕ тăван кĕтес, çĕршыв, истори, тăван чĕлхе, граждан тивĕçлĕхĕ ăнлавсемпе çыхăннă. Çаксем çыннăн ăс-хакăл вăйне çеç мар, пĕтĕмĕшле культурине палăртакан паллăсем те пулса тăраççĕ.

## «Ĕмĕрлĕх паллисем»

Çапла ят панă Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче уçăлнă курава. Асăннă выставка ыттисенчен Чăваш патшалăх симфони капелли республика Гимнне мăнаçлă та хăватлăн юрласа уçăлнипе уйрăлса тăчĕ. Патшалăх символĕсене йышăннăранпа чĕрĕк ĕмĕр çитнине халалланă мероприятие ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ **Валерий Филимонов**, ЧР вĕрентӳпе çамрăксен политикин министрĕ **Юрий Исаев**, ЧР культура министрĕн заместителĕ **Вячеслав Оринов**, Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Геральдика канашĕн яваплă секретарĕ **Глеб Калашников**, Чăваш халăх художникĕн, Чăваш Республикин Гербĕн тата Ялавĕн авторĕн Элли Юрьевăн мăшăрĕ **Галина Юрьева**, литература критикĕ **Атнер Хусанкай**, юридици ăслăлăхĕсен кандидачĕ **Анатолий Ухтияров**, Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх художникĕ **Николай Карачарсков** хутшăнчĕç.

Экспозицире – Чăваш Ен Гербĕ, Ялавĕ, республикăн муниципалитет йĕркеленĕвĕсен ялавĕсем, музейсемпе архивсенче упранакан патшалăх символĕсен историйĕпе çыхăннă документсемпе экспонатсем, декораципе хушма искусствăн ăстисен ĕçĕсем.

Валерий Филимонов курава пынисене паллă самантпа саламланă май Патшалăх символĕсенче чăваш халăхĕн нихçан сӳнми пахалăхĕсем, унăн ăнтăлăвĕсем сăнланнине палăртрĕ. Сăмах илекенсем татах пулчĕç. Мускавран килнĕ хăна РФ Президенчĕ çумĕнчи Геральдика канашĕн свидетельствисене – РФ Патшалăх геральдика регистрĕнче гербпа ялава регистрацилени ĕнентерекен документсене – Елчĕк районĕнчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене – Валерий Ананьева /Аслă Елчĕк ял тăрăхĕ/, Юрий Блинова /Елчĕк/, Георгий Зайцева /Аслă Пăла Тимеш/, Леонид Кошкина /Çирĕклĕ Шăхаль/, Сергей Павлова /Лаш Таяпа/, Валерий Петрова /Кĕçĕн Таяпа/, Василиса Сапожникована /Аслă Таяпа/, Юрий Смирнова /Курнавăш/, Алексей Трофимова /Тăрăм/ – пачĕ.

## Паянлăх çеç мар, яланлăхах

Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче çав кунах «Чăваш Республикин патшалăх символĕсем: ĕнер тата паян» ятпа «çавра сĕтел» иртрĕ. Тема ячĕ пирки хам енчен тата çапла хушса хунă пулăттăм: ĕмĕрлĕхех. Вун-вун çул çеç мар, темиçе ĕмĕр иртсен те пирĕн символсем тăхăмсене несĕлсен чи çывăх та хаклă туприсемпе тыткăнлама ан чарăнччăр.

«Çавра сĕтеле» ЧР культура министрĕн заместителĕ **Анатолий Тимофеев**, РФ Президенчĕ çумĕнчи Геральдика канашĕн яваплă секретарĕ **Глеб Калашников** тата ЧР Патшалăх Канашĕн Комитет председателĕ **Вячеслав Рафинов** хутшăнчĕç. Докладçăсем – истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ Владимир Клементьев, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ, ЧР патшалăх истори архивĕн директорĕ Галина Ертмакова, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăхăн аслă сотрудникĕ Юрий Викторов, искусствоведени докторĕ Михаил Кондратьев, ыттисем Чăваш Ен патшалăх символĕсен аталанса йĕркеленнĕ тапхăрне аса илчĕç. Хальхи вăхăтра çак ыйту муниципалитет йĕркеленĕвĕсен умĕнче тăнине тата вĕсене мĕнле татса памаллине сӳтсе яврĕç.

Символсен кунĕ пурри, тем тесен те, пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл пирĕн яваплăха ӳстерме пулăшĕ. Шкулсенче ачасене Чăваш Енĕн Ялавĕ, Гербĕ, Гимнĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса парĕç. Шел те, пĕр-пĕр пысăк уявра е ытти чухне Чăваш Республикин Гимнĕ янăранă вăхăтра эпир, ура çинче тăнисĕр пуçне, Гимн сăмахĕсене пĕр харăс юрлатпăр-и-ха? Сăмахĕсене пĕлместпĕр те çавăнпа шыв сыпнă пек тăратпăр. Е тата Ялавпа Герб çинчи геральдика паллисен пĕлтерĕшне те ăнлантарса пама мехел çитерейместпĕр. Каларăмăр ĕнтĕ: шăпах çак енĕпе те ЧР Патшалăх символĕсен кунне йышăнни пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн чăн патриотизм, чăвашлăх, тăванлăх туйăмĕсене вăратĕ вăл. Анне сăмахĕ, илемлĕ юрă, хитре эреш, çуралнă тăван кĕтес пекех çывăх пулччăр вĕсем чăвашшăн, унăн çĕрĕ çинче пурăнакан кашни çыншăн.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

## Саламлатăп!

*Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!*

*Сире Чăваш Республикин Патшалăх символĕсен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!*

*Наци пуянлăхĕ тата мăнаçлăхĕ пулнă май Чăваш Ен гербĕ, ялавĕ тата гимнĕ пире çĕнĕ ырă ĕçсем тума хавхалантараççĕ, ĕçлес тата аталанас енĕпе пĕрлештереççĕ, хамăрăн ачасен пуласлăхĕшĕн тăрăшса эпир республика шăпишĕн пĕрле яваплă пулнине аса илтереççĕ.*

*Чăваш Республикин патшалăх символĕсем пирĕн обществăна ĕмĕрлĕх хаклăхсем тавра пĕтĕçтереççĕ. Эпир хамăрăн юратнă аслă çĕршывпа – Раççей Федерацийĕпе – пĕрле Чăваш Ен хăватне туптатпăр: экономикăна аталантаратпăр, наукăра, культурăпа спортра çитĕнӳсем тăватпăр, республикăра пурăнакансен пурнăçне хăтлăлатмалли, Раççейĕн çамрăк гражданĕсемшĕн хăйсен пултарулăхĕпе усă курмалли майсем йĕркелетпĕр.*

*Пиртен кашнийĕн ăнăçăвĕсем регионăн пĕрлехи пуянлăхĕ пулса тăраççĕ.*

*Пирĕн çĕр çинче тăнăçлăхпа туслăх хуçаланччăр!*

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ** **Михаил ИГНАТЬЕВ.**